ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

32 (4446) №, 2015, август /çурла/, 6
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

КАНУ

## Ĕмĕтре — «Артекрах»...

**Пĕрремĕш класранпах пур предметпа та «пиллĕк» паллăпа вĕренекен Андрей Данилов район, республика шайĕнчи олимпиада-ăмăртусенче пĕрре мар çĕнтерÿçĕ пулнă. Хастарлăхне кура «Артека» кайма путевка çĕнсе илсен калама çук хĕпĕртенĕ. Ĕнтĕ юмахри пек вăхăтсем иртнĕ, нумай пулмасть Андрей тăван тăрăха таврăннă.**



– Анне, пĕлетĕн-и? Паянхи куна илсен хамăн пурнăçа виççе пайлатăп. «Тăван тăрăхра», «Артекра» тата «Хура тинĕс хĕрринчи кану хыççăн»... Чи килĕшÿлли – «Артекра» пулчĕ. Ĕмĕтшухăшпа эпĕ халĕ те «Артекрах». Унта мĕн курнине кунĕпе пĕрле ларсан та каласа пĕтерме май çук. «Артек» вăл – уйрăм патшалăх. Çитменнине вăл кăçал 90 çул тултарчĕ. Кашни кунĕ тĕлĕнмелле илемлĕ те хаваслă иртрĕ. Пÿлĕмсем хăтлă та таса, мĕн кирли йăлтах пур. Спорт площадки çывăхра пурри те кăмăла çĕклерĕ. Кунне столовăйĕнче пилĕк хутчен тутлă апатпа сăйлантăмăр. Вожатăйсемпе тĕрлĕ конкурс-ăмăртăва хутшăнтăмăр. Экскурсисемпе походсене çÿрени те кăмăла çĕклерĕ. Куравсемпе музейсенче те хаваспах пултăмăр. Июлĕн 3-11-мĕшĕсенче лагерьте Пĕтĕм тĕнчери ача-пăча кинофестивалĕ иртрĕ. Çак хаваслă эрнере чылай илемлĕ фильм курса савăнтăмăр. Çавăн пекех паллă актерсемпе, художниксемпе, музыкантсемпе курса калаçма кăна мар, вĕсемпе асăнмалăх сăн ÿкерĕнни те ĕмĕр асра юлчĕ. Крыма манăн татах каяс килет, – тенĕ Андрей хавхаланулллăн.

Хастар яш шкула кайиччеnex, Аня аппăшĕ пулăшнăран саспаллисене палланă. Кĕçĕн классенче вара вĕренÿре çеç мар, ăмăртусенче те палăрма тытăннă. «Вырăс упа çурийĕ» конкурса хутшăнса пултаруллисен йышне лекнĕ. Çĕнтерÿçĕсене Шупашкара чыслава чĕннине паянхи кунччен те кăмăлпа аса илет хастар йĕкĕт.

«Пирĕн спортсмен», – теççĕ ун пирки Елчĕк районĕнчи Елчĕк шкулĕнче педагогсемпе пĕрле вĕренекенсем. Ара, Андрей чăнах та спорта чунтан парăннă-çке. Кире пуканĕ йăтассипе, йĕлтĕрпе чупассипе, футбол-хоккей выляссипе ăна çитекен çук.

– Ашшĕне, Алексей Ардалионовича, пăхнă ĕнтĕ. Вăл спортшăн çунать, – тет амăшĕ, Алена Николаевна, ывăлĕн çитĕнĕвĕсемпе хăпартланнăскер.

Андрей хăйне телейлĕ те пуян çын тесе шухăшлать.

– Юнашар юратнă атте-анне, аппа, кукамайпа кукаçи, асаттепе асанне пур. Унтан ытла мĕн кирлĕ тата? Вĕсем мана мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарнă, пурнăçа хаклама, аслисемпе кĕçĕннисене хисеплеме вĕрентнĕ. Халĕ те кирлĕ вăхăтра сĕнÿ-канаш пани пурнăçра çитĕнÿ тума май парать, – тет вăл хăпартланса.

Çапла, улми йывăççинчен аякка ÿкмест теççĕ, чăнахах. Андрей та ашшĕ-амăшнех хывнă. Ара, юратнă çыннисем иккĕшĕ те педагогсем-çке.

*Элиза ВАЛАНС.*
Елчĕк районĕ,
Тÿскел.

**Хисеплĕ вулакансем!**
«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2016 çулăн I çуррине илсе тăмашкăн
июль уйăхĕнчен тытăнса август уйăхĕн 31-мĕшĕччен –
**ЙŸНĔ ХАКПА!**
«ХЫПАР» – 625,62 тенкĕ
(кăçалхи II çур çултинчен 172,44 тенкĕ йÿнĕрех)
«Хыпар»-эрнекун – 325,92 тенкĕ
(19,62 тенкĕ йÿнĕрех).
«ТАНТĂШ» хаçата 266,70,
«САМАНТ» журнала 187,26,
«ТЕТТЕ» журнала 148,98 тенкĕпе çырăнтараççĕ.

**«Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» журналсене**
**çитес çур çула çырăннисене мĕн кĕтет? Кун пирки эсир тепĕр кăларăмра вуласа пĕлме пултаратăр. Ку эрнере вара «Тантăш» хаçата йÿнĕ хакпа /266 тенкĕ те 70 пус/ çырăнса илĕр. Августăн 31-мĕшĕччен çырăннă квитанцисен копине редакцие ярса парăр. Парнеллĕ пулăр.**

# Салам, юратнă шкул!

**Тин çеç вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ темелле. Ачасем хаваслă çу кунĕсемпе киленме саланчĕç. Пĕрисем килте аслисене пулăшрĕç, иккĕмĕшĕсем тăван хуçалăх ĕçĕсене тума васкарĕç, виççĕмĕшĕсем сывлăха çирĕплетмелли кану лагерĕсенче пулса курчĕç. Çулçӳревсенче те чылайăшĕ тĕнче курса киленчĕ.**

**Кĕçех, акă, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ те çитĕ. Вăхăт нумай юлмарĕ. Ачасем хаваслă кăмăлпа тăван шкула васкĕç. Чылайранпа тунсăхлама ĕлкĕрнĕ тус-юлташĕпе чун килениччен курса калаçĕç. Таса та хăтлă шкулсем ачасен хаваслă сассипе тулĕç. Çутă та тирпейлĕ классем вĕренекенсене йышăнма хатĕр те.**

**Халь шкулсенче шăпах хĕрӳ тапхăр пырать – «пĕлӳ карапĕсем» çĕнĕ вĕренӳ çулне епле хатĕрленнине тĕрĕслеççĕ.**

## Паваркассисем хальхинче те малта

Районти чылай шкул ачасем каникула кайсанах пӳлĕмсене, шкул коридорĕсене юсаса çĕнетме тытăннă. Ĕçе çийĕнчех тунине нимĕн те çитмест. Çакна аван ăнланаççĕ шкулсенче.

Паваркасси шкул коллективĕ те паян тумалли ĕçе ырана хăварас мар тесе хăйсен умне çирĕп тĕллев лартнă. Классенче, столовăйра, спортзалпа шкул коридорĕнче юсав тунă. Уйрăмах шкул столовăйĕпе спорт зала, физикăпа информатика, хими кабинечĕсене, шкул çулне çитмен ачасен пӳлĕмĕсене пысăк тимлĕх уйăрнă. Халь пĕтĕм шкул таса та вĕр çĕнĕ пек. Вăл паян-ыран каннă, сывлăха çирĕплетнĕ ачасене йышăнма хатĕр.

Çак ĕçре вĕренекенсен тӳпи те пурри çамрăксене савăнтарать.

Çĕрпӳ районĕ,
Паваркасси шкулĕ.

## Ырă сунса йышăнĕ

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çывхарса килни кашни самантрах сисĕнет кунта та. Ачасем вĕрентекенсем ертсе пынипе пӳлĕмсене тирпей-илем кĕртме тăрăшаççĕ. Классенче юсав ĕçĕсем вĕçленнĕ те ĕнтĕ. Юлашки вак-тĕвеке паян-ыран туса пĕтерĕç те шкул: «Ырă сунса кĕтетпĕр!» – тесе ачасене йышăнĕ. Çу каçипе шкулсăр тунсăхланăскерсем хавaслă кăмăлпа çутă та таса, тирпейлĕ пӳлĕмсене кĕрсе ларĕç.

Шкул администрацийĕ И.Г.Евдокимовăна, Р.К.Воробьевăна, Т.А.Михайловăна юсав ĕçĕсенче нумай пулăшнишĕн чĕререн тав тăвать. Ыттисем те çак явапллă ĕçре хастарлăх кăтартнишĕн савăнать.



**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** ачасем класри сĕтел-пукана сăрласа тирпейлеççĕ.
Тăвай районĕ,
Йантăрччă шкулĕ.

## Ача-пăча ӳкерчĕкĕсен конкурсĕ – 2015

ВОДА РОССИИ

РФ экологипе çутçанталăк ресурсĕсен министерстви пуçарăвĕпе килĕшӳллĕн **«Тĕрлĕ тĕслĕ тумламсем»** ача-пăча ӳкерчĕкĕсен конкурсĕ пуçланнине пĕлтеретпĕр.



© *Ольга ШАМАЕВА ӳкерчĕкĕ.*

Конкурс тĕллевĕ: çамрăксен хушшинче шыв ресурсĕсемпе перекетлĕ те типтерлĕ усă курмаллине анлă сарасси, çитĕнекен ăрăва шыва хисеплеме хăнăхтарасси, ача-пăчана экологи ĕçĕ-хĕлне явăçтарасси, вĕсен пултарулăхне аталантарасси.

Конкурса ача садне çӳрекенсем, шкулта е ытти вĕренӳ заведенийĕнче пĕлӳ илекен 17 çула çитмен ачасем хутшăнма пултараççĕ. Ĕçсене ашшĕ-амăшĕн е тăванĕсен ярса пама юрать, заявкăра хăвăрăн тата ӳкерчĕк авторĕн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, адрес, телефон номерне тата ыт. те тĕплĕн пĕлтермелле.

Пултаратнă ӳкерчĕксем шыв тематикине сăнламалла. Номинацисен тулли списокне **http://voda.org.ru.** «Вода России» информаци порталĕнчи конкурссен уйрăмĕнче вуласа пĕлĕр.

Пултарулăх ĕçĕсене автор хăй шухăшласа кăлармалла. Ӳкерчĕке кирек мĕнле техникăпа та, компьютерти графика редакторĕсемпе те усă курса ӳкерме юрать. Ĕçре суту-илӳ маркине палăртсан, автор прависене сыхлакан пайсем пулсан ăна йышăнмаççĕ, пăхса тухмаççĕ.

Конкурс çĕнтерӳçисем Хисеп дипломĕпе парнене тивĕçеççĕ. Парнене Мускаври йĕркелӳ комитетне килсе илеймесен ăна почтăпа ярса параççĕ.

Çĕнтерӳçĕн приз илме комитет электрон почтине паспорт, /пĕрремĕш тата вырăнти регистрацие кăтартакан страницăсене/, СНИЛС копине ямалла.

Конкурс ĕçĕсене **кăçалхи октябрĕн пĕрремĕшĕччен** йышăнаççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон:
**+7 495 625 00 41 /Александра Всеволодова/.**

Электрон адрессем: **water-russia@voda.org.ru; http://voda.org.ru.**

***«Вода России» Федераллă тĕллевлĕ программа конкурс йĕркелӳ комитечĕ.***

## «Эпĕ «Тантăша» юрататăп!» конкурс



*Татьяна ПЕРЕПЕЛКИНА.*
Елчĕк районĕ,
Кушкă шкулĕ.

2016 ÇУЛХИ ПĔТĔМ РАÇÇЕЙРИ ЯЛХУÇАЛĂХ ÇЫРАВĔ

**Пурне те!**
**Пурне те!**
**Пурне те!**

## «Ялхуçалăх çыравĕ çинчен эсир мĕн пĕлетĕр?»

**викторина**

«Ялхуçалăх çыравĕ çинчен эсир мĕн пĕлетĕр?» викторинăна патшалăх статистикин Федераллă службин Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Территори органĕпе республикăри ачасемпе çамрăксен «Тантăш» хаçат редакцийĕ йĕркелеççĕ. Ăна 2016 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çурла уйăхĕн 15-мĕшĕччен иртекен Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравне халалланă. Çак ĕçĕн пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк. Ялхуçалăхне аталантарас тесен аграри умĕнче тăракан ыйтусене тĕплĕн тишкермелле, тĕрĕс информаципе усă курмалла. Çырав – ялти çĕнĕ улшăнусене пуçламалли тĕп тапхăрсенчен пĕри. Вăл умри çул-йĕре палăртма, вăйсене, майсене висме, хаклама май парĕ.

Тĕнчери чылай çĕршывра ялхуçалăх çыравĕсем çирĕп йăлапа пулса пыраççĕ. 2016 çулхи Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравне Раççей Федерацийĕн саккунĕпе килĕшӳллĕн ирттерессĕ.

Хуравсене **юпа уйăхĕн 31-мĕшĕччен** «Тантăш» хаçат редакцине çак адреспа: **Чебоксары, проспект И.Яковлева, 13** ярса памалла. Çавăн пекех хуравсене редакцин электрон адресĕпе те йышăнатпăр. Çĕнтерӳçĕсене Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравĕн асăнмалăх парнисемпе чыслатпăр.

**Ыйтусем**

1. Раççей Федерацийĕн «Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравĕ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн ялхуçалăх çыравĕсем миçе çултан пулса пыраççĕ?
2. Пирĕн çĕршыв историйĕнче пирвайхи хут çырав хăçан пулнă?
3. Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравне юлашки хут хăçан ирттернĕ?
4. 2016 çулхи Пĕтĕм Раççейри çырав эмблеми çине мĕн ӳкернĕ? Вăл мĕне пĕлтерет?
5. Çырав вăхăтĕнче переписчиксене документ кăтартмалла-и?
6. Ялта пурăнакан уйрăм хуçалăх тытакан çыннăн çырава обязательнăй йĕркепе е хăй ирĕкĕпе хутшăнмалла?
7. Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравĕн тĕллевĕсем мĕнле?
8. Çыравра мĕнле объектсене шута илеççĕ?

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1112 экз.

● ЗАКАЗ
№ 2994
Пичете август уйăхĕн 5-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Манăçми «Эткер»!



**Кашни çулах пирĕн республикăра тĕрлĕ регионта пурăнакан пултаруллă чăваш ачисем валли «Эткер» кану лагерĕ йĕркелеççĕ. Кăçал кунта 35 ача килчĕ. Вĕсене Ирина Диарова, Александр Степанов, Любовь Кудрявцева вĕрентекенсем кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Ачасен канăвĕпе паллашар-ха. Вĕсен кун йĕрки еплерех пуян пулни питех те тĕлĕнтерет!**

Пĕрремĕш паллашу кунĕ «Несĕл çĕрĕ çинче» ятпа пуçланчĕ.

Оренбургпа Самартан, Тюменьпе Мускавран тата Пушкăртстанпа Тутарстанран, Чăваш Енрен пухăннă ачасем пĕр-пĕринпе паллашрĕç, туслашрĕç. Хаваслăскерсем хăйсем çинчен нумай каларĕç. Лагерьте иртнĕ «Шыравçă», «Çурта» конкурссене хастар хутшăнчĕç… Чăваш халăхĕ çинчен фильм пăхса савăнчĕç. Ывăнма пĕлменскерсем каçхине ташă каçĕнче пулчĕç.

* * *

«Эткер» лагерĕн иккĕмĕш кунĕнче пурте чи малтанах зарядкăна тухрĕç.

Ирхи апат хыççăн вара И.А. Диарова тата Л.В. Кудрявцева чăваш чĕлхине хăш ача мĕнле пĕлнине кура /пĕрисем ăнланаççĕ, анчах чăвашла калаçаймаççĕ, теприсем çăмăллăнах пуплеççĕ/ икĕ ушкăна уйăрса вăйă-уроксем ирттерчĕç. Пурте пĕрле пуçтарăнса ушкăна «Туслăх» ят пачĕç. Туслăх сăмахăн кашни саспаллин хăйĕн вăрттăн пĕлтерĕшне тупрĕç: «Т» – тус, «У» – уçă, «С» – сăпайлă, «Л» – лайăх, «Ă» – ăслă, «Х» – хитре. Эппин, кунти ачасем пурте çакăн пекскерсем!

Чăваш Республикипе К.В.Иванова халалланă ăмăртăва «Кĕрен парăсри» кашни ача хастар хутшăнчĕ. Александр Марсович чăваш халăхĕн историйĕпе паллаштарнине кашни тимлĕ итлерĕ. Кăтартнă фильм çамрăксем хушшинче нумай тĕрлĕ ыйту çуратрĕ.

Футболла тата пионерболла выляса киленнĕ хыççăн вожатăйсен концертне канакансем хаваспах курса савăнчĕç.

* * *

«Эткерĕн» виççĕмĕш кунĕнче чăваш юрри-ташшипе паллашас тĕллевпе ачасем Муркаш районĕнчи Катькасси Культура çурчĕ çумĕнчи «Çăлкуç» фольклор ушкăнĕпе тĕл пулчĕç. Тĕлпулу чунра тарăн йĕр хăварчĕ, чĕрери кашни хĕлĕхе хускатрĕ. Чăваш юрри-кĕввипе хăпартланнă ачасем хĕр сăри ташшине А.М.Степановпа вĕренчĕç.

«Алло, эпир талантсем шыратпăр!» конкурса «Туслăх» ушкăн хастар хутшăнчĕ. Юрри те, ташши те, сăвви те пулчĕ унта.

Арçын ачасем вожатăйсене хирĕç футболла вылярĕç, хĕрачасем – пионерболла.

Чăваш чĕлхине вăйă мелĕпе вĕренмелли урокра ачасем тĕссемпе паллашрĕç, шутлама вĕренчĕç.

* * *

«Эткер» лагерĕн 4-мĕш кунĕ чи пуяннисенчен пĕри пулчĕ тесен те йăнăш мар. Министерствăсенче ĕçлекенсем, Людмила Кинер юрăçă, Олеся Игнатьева спортсменка, Чăваш наци конгресĕн ĕçченĕсем килсе çитрĕç. Ачасене «Чăваш тĕррин вăрттăнлăхĕ» тата Константин Ивановăн «Нарспи» кĕнекисене парнелерĕç.

Ачасем те парăмра юлмарĕç. Вĕсем хăнасене юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

* * *

Тепĕр кун «Эткер» кану лагерĕн «Туслăх» ушкăнĕ Шупашкар хулипе паллашрĕ. Маршрут Введени соборĕнчен пуçланчĕ. Ачасем 17-мĕш ĕмĕрти архитектурăпа тата авалхи турăшсемпе паллашрĕç. Ехрем хуçан çуртĕнче вырнаçнă ӳнер музейĕнче пулчĕç, тĕрлĕ картина курса тĕлĕнчĕç. Çеçпĕл Мишши музейĕнче унăн ертӳçи А.В.Андреева кăвар чĕреллĕ сăвăçăн синкерлĕ пурнăçĕ çинчен каларĕ. Шупашкар тинĕсĕпе паллашни, палăксене курса çӳрени нихăçан та манăçмĕ.



* * *

Лагерĕн 6-мĕш кунĕнче «Туслăх» ушкăнăн тата тепĕр çăлтăр хутшăнчĕ. Пирĕн пата Муркаш районĕнчи Калайкассинчен алă ăстисем Петр Яковлевичпа Зинаида Васильевна Мазуркинсем тĕлпулăва çитрĕç. П.Я.Мазуркин нумай ĕçе пултарать: юрă юрлать, тĕрлĕ инструмент ăсталать, кĕсле, шăхлич калать, шакмак шаккать. Зинаида Васильевна тухья, умçакки, хушпу, масмак тата чĕнтĕрлесе çыхнă сĕтел çиттипе, алшăллисемпе, тĕрленĕ япаласемпе паллаштарчĕ.

ГТО нормативĕсене кашни ăнăçлă пурнăçларĕ . Кайран ушкăн хăй суйласа илнĕ юмахпа савăнтарчĕ.

* * *

Саккăрмĕш кунĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнчи Космонавтика музейне çитрĕмĕр. Ун хыççăн çул Шупашкарти Çĕнтерӳ паркне выртрĕ. Ачасем кунта тĕрлĕ вăхăтри çар хатĕрĕсем курчĕç. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен таврăнайманнисене асăнса ĕмĕр сӳнми çулăм умĕнче пуç тайрĕç. Кун каç енне сулăнсан «Кĕрен парăс» лагерь хорсен ăмăртăвне хутшăнчĕ. Эпир конкурса виçĕ юрă тăратрăмăр: пĕрремĕшĕ – А.Г.Николаев космонавт летчикăн чи юратнă «Вĕç, вĕç, куккук» юрра хорпа юрларăмăр. Иккĕмĕш юрра Пушкăрт çĕршывĕнчен килнĕ Сергей Дмитриевпа Артем Никифоров «Ачасем, ăçта чупса каятăр» юрра шăрантарчĕç, виççĕмĕш юрра Юля Мокеева парнелерĕ.

* * *

«Эткер» лагерьти «Туслăх» ушкăнăн тăххăрмĕш кунĕ асфальт çинчи ӳкерчĕксен конкурсĕнчен пуçланчĕ. Алина Сулагаевăпа Юлия Павлова çăлтăр çĕнсе илчĕç. Çав вăхăтрах ачасен пĕр ушкăнĕ чăваш халăх юрă ăстин Ираида Вдовинăн хĕрĕ Светлана Васильевна Березнева, мăнукĕ Маргарита Геннадьевна Романова тата вĕсен ачисем Андрей Ларионовпа Кирилл Романов пулчĕç. Тăван халăх юрăçи çинчен кинофильм тата «Кукамай ăшши» презентаци те пăхрăмăр.

«Манăн тăван кĕтес» фотовыставкăра «Туслăх» ушкăн воспитателĕн Любовь Васильевна Кудрявцевăн ĕçĕсемпе паллашни уйрăмах асра юлчĕ. Сăнӳкерчĕксенче тăван кĕтес, атте-анне, тус-юлташ, пахчаçимĕç, чечек, курăк, чĕрчун тата ытти те… «Эткер» лагерь ертӳçи Ирина Алексеевна çирĕплетсех çапла каларĕ: «Тăван кĕтесрен хакли çук çав!» Пĕр самантлăха ӳкернĕ ĕçсем ырăлăх туйăмĕ çуратрĕç.

Ашшĕ-амăшĕсен кунĕ тĕлне лагерьте канакансем ятарлă концерт хатĕрлерĕç. Кашнин кăмăлне кайрĕ вăл. Кăнтăрлахи апат хыççăн ăсталăх сехечĕ «Чăваш апат-çимĕçĕ: хуран кукли» пулчĕ. Ачасем тăпăрчăран хуран кукли хатĕрлерĕç, пурте пĕрле астиврĕç.

Яланхи пекех куçса çӳрекен библиотека ĕçлерĕ. Ачасем нумай кĕнеке, хаçат-журнал вуларĕç…

«Эткерте» çуралнă туслăх хĕлхемĕ ачасен чĕринче нумайччен упранĕ.



***Лагерь дневникĕнчи йĕркесемпе Владимир ФЕДОРОВ, Любовь КУДРЯВЦЕВА (сăнӳкерчĕкĕсем) паллаштарчĕç.***

**САНӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** лагерьти хаваслă кунсем.

# Лирика урокĕ

Вениамин ТИМАКОВ

## Сăмах илемне туйсан...

**(сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма)**

*(Малалли. Пуçламăшĕ 25-31-мĕш номерсенче).*

Висĕ сыпăклă стопасем те тĕрлĕрен вариантлă пулма пултараççĕ. Схемăри пусăмсене хăш чухне сăвăри хăш-пĕр сăмахсем пăхăнса тăмаççĕ. Тĕслĕхшĕн, Митта Васлейĕн анапест висипе çырнă тепĕр сăввинчен пĕр строфа илсе пăхар.

Ял хĕрри укăлча. Симĕсленнĕ калча
Хĕвелпе пĕрлешсе йăрăм-йăрăм юхать.
Сыв-и, ватă юман! Кунĕпех ачапча
Сан туйру айĕнче туй тăвать.

«Сыв-и, ватă юман...» пуçланса каять висççĕмĕш йĕрке. Ку икĕ стопара анапест висси пăсăлать. Анчах та сăвă пĕтĕмĕшле тĕп тытăмрах юлать. Мĕншĕн тесессĕн ăна ытти çирĕп стопасем тата клаузулăсем çĕклеççĕ.

Хăш-пĕр стопасенчи пусăмсене улăштарсан, висĕ сыпăклă сăвă тĕрлĕрен янăрать, тĕрлĕрен кĕвĕ çуратать.

Çапла вара, силлабо-тоника ĕмĕрсем хушши çĕнелсе, улшăнса пынă. Хальхи вăхăтра та вăл аталанать, хăйĕн çĕнĕ пахалăхĕсене палăртать.

Тĕрлĕ халăх, хăйĕн чĕлхине кура, ытларах пĕр-пĕр висене кĕвĕллĕ сăвăсем çырма тăрăшнă. Ку вăл чĕлхери сăмахсенчи пусăм ăçта пулнинчен те нумай килет. Француз чĕлхинче акă пусăм ытларах сăмах вĕçне, акăлчансен сăмах пуçламăшне ӳкет. Хысалти сыпăка пусăм ӳкесси тутар чĕлхинче те тĕп вырăн йышăнать.

Вырăс чĕлхи ку енĕпе писĕ. Вырăс сăмахĕсенчи пусăм тĕрлĕ çĕрте пулма пултарать, тата вĕсем, сăмахсене тĕрлĕ падежа, тĕрлĕ формăна лартнă май, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна та куçаççĕ.

Чăваш чĕлхинче те пусăмсем сăмахсенчи тĕрлĕ сыпăксене ӳкеççĕ. Çавна май пирĕн поэзире силлабо-тоникăри пур висепе те ирĕклĕн усă курма май пур. Ямб та, хорей та, дактиль те, амфибрахи те, анапест та чăваш сăввишĕн ют мар.

Тăван чĕлхен çав пахалăхĕсене чи анлăн, тарăннăн ăнланакан çын вăл кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши пулнă. Вăл чăваш сăввине, силлабика картинчен кăларса, Европа, вырăс поэзийĕсен анлă уйне тухма пулăшнă, унăн сулмаклăхне вăйлатнă, кĕввĕн пĕлтерĕшне сӳлерех çĕкленĕ.

Силлабо-тоникăн илемлĕхне, кĕвĕлĕхне сăвă çырма тытăнакан кашни çын тĕплĕн, тишкерӳллĕн вĕренме, ăса хывма тивĕç. Поэзин ырă симметрилĕхĕ çавăнта ытларах палăрать ĕнтĕ, усăмлă кĕвви сынсен чун-чĕрине çитсе пăлхатать, тарăн шухăш-туйăм çуратать.

### Тоника

Силлабо-тоника сăвă висинче йĕркесенчи сыпăксенче пусăмсен шутне пĕр харăсах тытса пыраççĕ терĕмĕр. Тоника сăвă висинче вара пусăмсен (ударенисен) шучĕ кăна пĕр евĕрлĕрех пулать (*тон* грекла – сасă, *тонос* – пусăм, ударени). Тоника та поэзире авалтанпах аталанса пырать. Малтанах вăл халăх юррисенче йĕркеленнĕ. Каярахпа сăвăçсен пултарулăхĕнче те паллă вырăн йышăнма тытăннă. Тоникăра пусăмлă сыпăксем хушшинчи пусăмсăр сыпăксен шучĕ те (хăш чухне йĕркесенчи сыпăксен хисепĕн хисепĕ те) пĕр пек мар.

Атăлăн леш енче мĕн ĕçлеççĕ? (10)
Чĕнтен тилхепе яваççĕ. (8)
Варрисене пурçăн та, ай, хураççĕ, (11)
Вĕçĕсене ука яраççĕ. (9)

*(Халăх юрринчен.)*

Илсе кăтартнă тĕслĕхри 1-мĕшпе 3-мĕш йĕркесенче 4-шар, 2-мĕшпе 4-мĕш йĕркесенче 3-шер пусăм. Сыпăксен шучĕ вара йĕркесенче тĕрлĕрен (10, 8, 11, 9). Акă хăш-пĕр пусăмсем юнашарах тăма пултараççĕ

(«енче мĕн», «вар-ри-се-не пур-çăн) хăш-пĕр пусăмсем хушшинче вара пусăмсăр сыпăксем иккĕ те, висççĕ те е ытларах та пулма пултараççĕ

(«А-тă-лăн леш ен-че», «чĕн-тен тил-хе-пе»). Кунта силлабо-тоникăри пек пĕр евĕрлĕ стопасем черетленсе пымаççĕ. Сăввăн ритмикине йĕркелес енĕпе пусăм тĕп вырăнта тăрать.

Тоника тытăмĕнчи сăвă висисем темиçе тĕрлĕ пулаççĕ: силлабо-тоникăна çывăх висесем, дольниксем, логаэдсем, акцентлă сăвăсем.

Тата çакна каласа хăвармалла. Тоника сăвă висисем халăх поэзийĕнче ĕмĕртенпех пулнă. Халăх пултарулăхне тĕпчесе, вĕренсе пынă май, поэт-профессионалсем унти ритмикăпа анлăн усă курма тытăнаççĕ. Уйрăмах ку витĕм халăх поэзийĕ евĕрлĕрех çырнă произведенисенче палăрать.

Халăх юррисемпе былинисен илемлĕхне, сăнлăхне поэтсем ĕлĕкренех юратса тĕпченĕ, вĕсен ытарайми кĕввипе хăйсен произведенийĕсенче усă курма тăрăшнă. Çакна эпир А.С.Пушкин, М.Ю.Лермонтов, Н.А.Некрасов, А.Кольцов тата ытти чаплă поэтсен пултарулăхĕнче куратпăр. Сăмахран, А.С.Пушкинăн «Сказка о рыбаке и рыбке» юмахĕнче вырăссен XVI – XVII ĕмĕрсенче анлă сарăлнă былинисенчи тоника сăвă виси тĕп вырăнта тăрать. Унти йĕркесенче висĕ е тăватă пусăм, йĕркесем ама клаузулăпа вĕçленеççĕ.

Жи́л стари́к со свое́й стару́хой
У са́мого си́него мо́ря.
Они жи́ли в ве́тхой земля́нке
Ро́вно три́дцать ле́т и три го́да.

«Сказка о Балде» юмахĕнче те халăх поэзийĕн виси усăмлă палăрать.

М.Ю.Лермонтов та «Калашник хуça çинчен хывнă юрринче» былина кĕввипе, сăнарлăхĕпе, тытăмĕпе анлă усă курнă. Ку юрăри йĕркесенче тĕп пусăмсем виççĕ.

Ой ты гой е́си царь Ива́н Васи́льевич!
Обману́л тебя́ твой лука́вый ра́б,
Не сказа́л тебе́ пра́вды и́стинной,
Не пове́дал тебе́, что краса́вица
В це́ркви бо́жией переве́нчана,
Переве́нчана с молоды́м купцо́м
По зако́ну на́шему христиа́нскому.

М.Ю.Лермонтовăн чаплă произведенине К.В.Иванов чăвашла питĕ ăста куçарнă, тоника кĕввине, сăнарсене сыхласа хăварнă.

Эй, а́слă патша́, эй, Ива́н ĕмпӳ!
Уттала́рĕ сана́ уса́л чура́ву́,
Калама́рĕ сана́ тĕрĕсне́-чăнне́,
Калама́рĕ сана́ сарă хĕр çинче́н,
Качча ка́йнă-çке çав хуça хĕрĕ,
Ту́рă çы́рнă тăрăх, чиркӳ йĕркипе́
Пĕр çа́мрăк хуçапа́ а́рлă-а́рăмлă...

**(Малалли пулать).**

## Мăнуксем патне янă салам



*Константин АЛЕКСЕЕВ* (Вăрнар районĕ, Кӳстӳмĕр шкулĕ) *ӳкерчĕкĕ.*

Мĕн пĕчĕкрен тăлăхра
Ӳсрĕм эп кукамайпа.
Анне сасси хăлхара –
Юлчĕ манăн асăмра.

Килчĕç хурлăхлă кунсем
Атте тепре авлансан.
Шывланатчĕç куçăмсем:
Çĕнĕ анне ĕнтĕ ман.

Çурма тăлăх ачана
Шута хума пăрахрĕç,
Ĕçпе хуçнă шăмшака
Пач та канлĕх памарĕç:

Ирех тăрса вут çурнă,
Хыпаланса шыв йăтнă,
Ирхи сакăр сехете
Шкула чупнă сиккипе.

Шкултан кайма вăхăтчĕ –
Кайăк сасси пахчара.
Ун чух çĕртме уйăхчĕ…
Эх! Кĕрлерĕ çут тĕнче!

Эпир, çамрăксем, пĕрле –
Хавас ташă картинче.
Хĕрсен йăлтăр куллипе
Ирĕлетчĕ яш чĕре.

Пуçра çутă ĕмĕтчĕ –
Малаш чечек çуратчĕ.
Анчах пирĕн ĕмĕте
Вăрçă татрĕ-çке питех.

Улшăнчĕ çав самана:
Мĕнле килте лармалла?
Тăван çĕре упрама
Алла пăшал тытмалла!

Военкомат ян! янрать –
Куçа хуплать куççулĕ.
Салтак юрри чăрăнать –
Камăн мĕнле телейĕ.

Акă тухрĕ пĕр салтак,
Ятран чĕнме пуçларĕ.
Эпĕ хытрăм вĕт шалтах –
Манăн ятăм тухмарĕ.

Ман пек çамрăк яшсене
Кăштах кĕтме каларĕç.
Вăхăт çитсен хăйсемех
Систерессе шантарчĕç.

Эпĕ ĕçре вăр-варне
Пурте ялта пĕлетчĕç.
Колхоз хуçи ыйтнипе
Бухгалтера вĕрентрĕç.

Анчах эпĕ кĕтнĕ кун
Кĕçех çитрĕ – савăнăç!
Эпĕ тăлăх, çамрăк чун
Вăрçă хирне талпăнăп.

Пĕр-ик уйăх пăшала
Алла тытма вĕрентрĕç.
Унтан ирсĕр тăшманпа
Çапăçмашкăн ăсатрĕç.

Йывăр тупă, миномет
Мана часах итлерĕç,
Хăйсен вутлă чĕлхипе
Тăшмансене çунтарчĕç.

Тăшман, ытла сĕмсĕрскер,
Тĕп хулана талпăнать.
Тăван çĕршыв – çĕр анне
Куççулĕпе макăрать.

Тискер пуля ши! те ши!
Пирĕн енне вĕçкелет.
Унăн сĕмсĕр тăхланĕ
Юлташсене вĕлерет.

Йĕри-тавра хуп-хура
Тĕтĕм тăрать сывлăшра.
Кӳкĕрт тата юн шăрши
Пырса кĕрет сăмсана.

Сталин хули патĕнче
Тытăçрăмăр тăшманпа.
Тăват талăк чарăнми
Бомба тăкăнчĕ унта.

Совет салтак вăй-халне
Тăшман ун чух ăнланман.
Юнлă хăсма вăхăтне
Вĕсем, паллах, чухлайман.

Тăшман чакать каялла:
Анăça та анăça.
Латви, Эстони, Литва
Тин тупаççĕ канăçа.

Çапăçрăм эп тăват çул –
Ыр пиршĕти упрарĕ.
Вырăс тусăм темĕн чул
Ман пурнăçа сыхларĕ.

Умра мина çурăличчен
Кĕлеткипе хупларĕ,
Мана вилĕм аллинчен
Вăлах çăлса хăварчĕ.

Хăйне йывăр суранпа
Лазарета ăсатрĕç.
Урăх вырăс юлташпа
Калаçасси пулмарĕ.

Тата пĕр çапăçура
Мана кăштах амантрĕç.
Çапла хамăн отрядрах
Юлсан мана сыватрĕç.

Кӳкĕрт тата юн шăрши
Эп шăршларăм тăват çул.
Тăшманăн ирсĕр пульли
Йĕрлерĕ çав темĕн чул.

Аслă вăрçă хирĕнче –
Ман юлташсен вил тăпри.
Совет çарĕ хĕснипе
Тӳсеймен нимĕç çынни.

Хăйсен йăви çийĕнче
Ал çĕклер: «Гитлер капут!»
Вĕсен пуçĕ тăрринче
Ялкăшрĕ тинех салют.

Пире татах сых ятне
Киле часах ямарĕç.
Унтан хуллен кашнинех
Тăван киле ăсатрĕç.

Эй, ачамсем, мăнуксем,
Тăнăçлăхра пурăнăр.
Эпир тӳснĕ асапсем
Ан пăлхатчăр! Ыр курăр!

Ӳлĕм ан çунчăр ялсем,
Вăрçă мĕнне ан курăр.
Пĕтĕм халăх ачисем
Йăлтăр кулăпа тулччăр.

Кăвак пĕлĕт çийĕнче
Сарă хĕвел ялкăштăр,
Кашни çуртăн çамкинче
Кăвакарчăн калаçтăр.

Ан пултăр чунра юлхав,
Кĕнекепе туслашăр.
Тăван халăхăр ыйтсан
Кар тăмашкăн ан манăр.

Пире, ватă çынсене,
Ӳлĕм те сума сăвăр.
Тăпрам çине хăш чухне
Чечек хума ан манăр.

Таса чунпа сывă ăс
Ялан пулччăр çумăрта.
Курайманлăх, хапсăнас
Шухăш ан пултăр тата.

*Анастасия КИРШЕВА.*
Муркаш районĕ,
Юнкă шкулĕ.

## Качака тирĕнчен – яшка... Мĕн тери тутлă!

Эльза Филипповна Сидякина 1930 çулта çуралнă. Вăрçăччен унăн ашшĕне, моряка, Ленинградри пăрахут çине ĕçлеме куçарнă. 1941 çулхи июль уйăхĕнче вара кил-йышĕпе сывпуллашса фронта тухса кайнă. Хĕрачапа амăшĕ Ленинградри хваттерте пурăннă. Эльзăн асаилĕвĕ вара такама та хумхантарса куççуль кăларттарĕ.

«Çак çулхинех, августăн 3-мĕшĕнче, вунпĕр çул тултартăм. Кунран-кун çимеллисем пĕте пуçларĕç. Пурăнма йывăрлансах пырать. Акă сивĕ хĕл çитрĕ. Пушшех тертленме тытăнтăмăр. Хырăм выççи кăна мар, сивĕ те йăлтах аптăратса çитерчĕ. Пирĕн икĕ çăкăр карточки: аннен тата манăн. Мана 125, аннене 250 грамшар çăкăр лекет кунсерен. Эпир, ачасем, вăрçа пула ир çитĕнтĕмĕр. Унччен шкула пукане йăтса çÿреттĕмччĕ, халĕ вăл мана пачах та интереслентермест. Ăçта выртни те кăсăклантармасть.

Подъездсенче тем пысăкăш йĕкехÿресем ĕрчесе кайрĕç. Хайхискерсем çынсем вăйсăрланнине туяççĕ ахăртнех, хăваласан та вырăнтан тапранмаççĕ. Кусран шăтарасла пăхса тем кĕтеççĕ. Хамăр та вĕсенчен шикленми пултăмăр.

Вут-шанкăран хĕсĕк пулнăран пÿрт варринчи буржуйкăна сĕтел-пуканпа, кравать-диванпа хутма тытăнтăмăр. Унсăрăн шăнса вилетпĕр-çке.

Килте пурăнакан пысăк та хаяр овчарка та йăвашланчĕ. Унччен çуталса тăракан куçĕсем сÿнчĕç. Сас-чÿ илтсен алăк патне чупса пырса хаяррăн вĕретчĕ пулсан, халĕ вăйсăрланчĕ. Чĕччисем юнланса пĕтрĕç, сĕчĕ тухманран çурисем йăлтах çыртса, чĕрмелесе пĕтерчĕç çав. Кайран пĕчĕкскерсем пĕрерĕн-пĕрерĕн вилсе пĕтрĕç.

Кÿршĕсем пирĕн йытта илме килчĕç. Мăйĕнчен кантрапа кăкарса илсе тухма тытăнчĕç. Анчах вăл утасшăн мар, турткалашать. Пĕрре пирĕн çине çаврăнса пăхать, тепре – ют çынсем çине. Куçĕсем шывланнине курсан чун ыратрĕ. Ара, хăйне пусассине чухлать пулас. Выльăх тавраш ун пеккине сисет теççĕ вĕт.

Пĕр кунхине урампа пынă чухне такам чĕннĕрен чарăнса тăтăм. Инçех те мар, юр çинче, вăйсăр арçын выртать.

– Ăша тахçантанпах пĕр тĕпренчĕк яман... Пулăшсам... Хăть кофе ĕçтерсем, – тилмĕрчĕ хăйăлти сассипе.

Вăй çук пулин те пÿртелле чупса кĕтĕм. Ара, çынна пулăшас килет-çке. Аннене мĕн курни-илтнине каласан, вăл та хирĕçлемерĕ. Цикорипе вĕретнĕ шыва савăта тултарса пачĕ. Çав çынна вăхăтра пулăшу парас тесе каялла васкаса тухрăм. Шел, эпĕ çитнĕ çĕре вăл пичĕпе юр çине тăрăннă. Хускалмасть те, сывламасть те. Вилнĕ. Выçăпа. Ирхине карточкăпа çăкăр кайса илетпĕр. Грампа çеç параççĕ те, мĕнех ĕнтĕ вăл? Ăшчике йĕкĕлтемелĕх çеç. Паян авă çăкăр çинĕ хыççăн çара тимĕр кравать çине канма выртрăмăр. Ара, утмалăх пĕр чĕптĕм вăй-хал юлмарĕ-çке. Тем пекех тăраниччен апат çиес килет. Анчах хăçан пулать унашкалли, юмахри пекки?

– Анне, астăватăн-и, эсĕ мĕн тери тутлă икерчĕсем пĕçереттĕн. Эх, çавăн чухне çуллă икерчĕсене тата ытларах çимелле пулнă та çав... Вăрçăччен сĕтел тулли тутлă апат-çимĕçчĕ. Кирек хăш вăхăтра та çиме пулатчĕ, халĕ урайĕнчи çăкăр тĕпренчĕкĕсене те çÿп-çаппа пĕрле пуçтаратпăр, – терĕм иртнине куç умне кăларнă май.

Анне чĕнмест, ассăн сывлать. Вăйсăррăн куçне уçкаласа хупать. Шухăш аваăрне путрĕ ахăртнех.

– Анне, – тетĕп эпĕ каллех апат пирки аса илсе. – Тепре тăраниччен çăкăр çиесчĕ те... вилесчĕ.

1942 çулхи хĕллехи вăхăт. Сивĕ. Хырăм выççи те кулянтарать. Вилекен нумай. Вĕсен ÿчĕсене пуçтарса ĕлкĕрейменрен урамрах выртаççĕ.

Пире питех те йывăр пулнине атте пĕлет, анчах нимпе те пулăшма пултарайманран чунтан пăшăрханать. Пĕррехинче вăл юлташне хăй хуйхи пирки пĕлтернĕ, çемйине епле те пулин çăмăллăх тупса пама ыйтнă. Тусĕ, Рахельсон, ырă кăмăллă та çын нушине ăнланаканскер мана завода вырнаçтарчĕ. Эпĕ цехра турпассем пуçтаратăп. Урăх карточка туса пачĕç. Ĕнтĕ унчченхи пек 125 грамм мар, 400 грамм çăкăр лекме тытăнчĕ мана. Çакă пирĕншĕн калама çук пысăк пуянлăх пулса тăчĕ.

Çăкăрне вара хутпа чĕркенĕскер, хуп-хура... Апла пулин те тутлă... Пĕррехинче апат-çимĕç упранакан элеватора сирпĕтнĕ тенине илтрĕм. Ара, хăшĕ-пĕри калана тăрăх унта çимеллисем тупма пулать. Эпĕ те çула пуçтарăнтăм, çитсе килме – ултă çухрăм. Хырăм выççи тем те тутарать вĕт. Çурма çулта нимĕçсем пеме тытăнчĕç. Хăрамарăм. Пĕтĕм вăя пуçтарса элеватор патне хырăмпа шуса çитрĕмех. Темех çук, çапах качака тирĕпе çуннă ясмăк кăштах тупрăм. Пĕр вăхăт çаксенчен яшка пĕçерсе çикелесе пурăнтăмăр. Ай, мĕн тери тутлă!

1943 çулхи март уйăхĕнче анне вырăн çинчен тăрайми пулчĕ. Аттен тусĕ, Рахельсон, каллех пирĕн пата килчĕ. Эвакуаци пирки калаçрĕ, темĕнле хутсем парса хăварчĕ. Пуçтарăнма хушрĕ.

Вăйсăр анне вырăн çинчен нушаллă тăчĕ, кирлĕрех тата аванрах япаласене пуçтарма тытăнчĕ. Ара, вăрçăччен атте моряк пулнă-çке. Лайăх ĕçлесе илнĕ, çавăнпа килте хаклă йышши япаласем те кăшт пур пирĕн.

Йăлтах халран кайнă аннене вокзала çити, япаласемпе пĕрле, виçĕ сехет туртса кайрăм. Пирĕн умрах, Ладога кÿллинче эвакуаци çыннисемпе пĕр машина пăр айне самантрах анса кайрĕ. Нихăшĕ те пулăшу ыйтса кăшкăрса ĕлкĕреймерĕ.

Мана пĕр çын шеллесе шоколад тыттарчĕ. Анне ăна самантрах туртса илчĕ.

– Уй, тем курса лараси пур. Выçă хырăмпа кун пеккине çиме юрамасть, – терĕ ман çине пăхса.

Унăн сăмахĕсем тĕрĕс пулнине пĕлетĕп-ха, анчах çиес килет-çке. Авă, эвакуаци çыннисене, выçăскерсене, ырă кăмăллă çынсем çуллă яшка çитернипе мĕн чухлĕн вилнине калаççĕ. Сасартăк çапла нихăçан курманла çимелле мар иккен.

Тавар турттаракан пуйăс çине лартăмăр. Вакунра вăтăрăн. Кубане çитсен пире тĕрлĕ çемьене вырнаçтарма тытăнчĕç. Хуçа хĕрарăмĕ, аннен хаклă япаласем пулнине пĕлнĕскер, усал шухăш тытнă. Анне çывăрса кайсан ăна кÿршĕ хĕрарăмĕпе пăвса вĕлерме шухăшланă. Вĕсен калаçăвне эпир аннепе ăнсăртран илтрĕмĕр. Хăраса ÿкрĕмĕр. Çар çыннисем патне каялла чупса кайрăм та хăйсемпе пĕрле илсе кайма тилмĕртĕм. Мана ăнчĕ, эпĕ вĕсене ÿкĕте кĕртме пултартăмах.

Махачкалара пултăмăр, кайран – Тутарстанра... Унта пире атте тупрĕ. Ăна эпĕ тÿрех палласа та илеймерĕм... Вăл пире Мускава, кăштахран Ленинграда илсе кайрĕ. Вăхăт иртсен вăл каллех фронта тухса кайрĕ. Эпир хуларах юлтăмăр.

Блокадăна асанне чăтса ирттереймерĕ. Вăрçăра вара аттен икĕ пиччĕшĕ те пуçĕсене хунă. Заводра электрикра ĕçлекен Павел хăй пурнăçне шеллемесĕр карапа çăлса хăварнă. Доксенчен пĕринче çунтармалли-сĕрмелли материалсем çунма пуçласан самантрах ăна хăй ÿчĕпе хупласа сÿнтернĕ. Инкекрен çăлса хăварнă карапа, анчах хăй вăйлă писсе кайнă. Тепĕр тăхăр кунтан унăн куçĕсем ĕмĕрлĕхех хупăннă... Иккĕмĕш пиччĕшĕ Львов çывăхĕнчи хĕрÿ çапăçура танкра çунса кайнă.

Çакăн хыççăн вăрçă çинчен пĕр фильма та куççульсĕр пăхаймастăп е тепĕр чухне пачах та пымастăп телевизор патне. Иртни паянхи кун та чуна ыраттарнăран... Блокадăччен пирĕн çуртра 88 çын пурăннă пулсан, хыççăн 3-ĕн çеç юлтăмăр. Хăрушă!»

## Аттеçĕм, таврари илемлĕхе урăх кураймастăп çав...

Ленинградра пурăнакан ачасем, выçăпа та сивĕпе аптăраса çитнĕскерсем кунран-кун начарланнă, утма вăй-халĕсем те юлман. Хăрушă вăрçă вĕсене чĕмсĕрлетнĕ, пурнăç тути-масине ир туйма вĕрентнĕ. Хăшĕ-пĕри хăй мĕн ятлине те калама пултарайман. Вăйсăрланнине, йывăрланнине кура вилĕм çывхарса çитнине чунпа туйнă ним айăпсăрскерсем. Вунвиççĕри Ленинград хĕрачи, Таня Богданова, ашшĕ патне çырнă йĕркесенче те çакă уçăмлăн палăрать.

«Аттеçĕм, питĕ чирлетĕп... Паян е ыран вилĕм алăкран шаккасса кĕтсех выртатăп. Эпĕ сирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайсан, тархасшăн, никама та айăп ан тăвăр. Пурнăçăн тумхахлă сукмакĕпе хам тĕрĕс мартарах утрăм пулас. Хăш чухне анне аса вĕрентсе калатине ăша хывмарăм ахăртнех. Аттеçĕм, сана пĕр кунхине: «Санăн хĕрÿ ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă», – тесе усал хыпар пĕлтерекен тупăнатех. Эсĕ шăлна çырт... чăт та тÿс. Куççуль ан кăлар. Эпĕ пĕрех чĕрĕлсе тăраймăп. Эх, атте... Тĕрĕссипе, пĕрре те вилес килмест... Анчах шăпаран иртеймĕн. Мана сыватассишĕн анне мĕн чухлĕ тăрмашмарĕ-ши? «Хĕрĕм, сана ура çине тăратассишĕн тем те тăвăп, пурнăçа пама та хатĕр», – терĕ. Хăй çиес апата вĕçĕмсĕр мана пачĕ. Самайланаймарăм. Анне ĕмĕтленнĕ пек пулаймарĕ. Чир тата выçлăх пирĕнтен вăйлăрах иккен. Нимĕнле те парăнтараймарăмăр вĕсене.

Аттеçĕм, эпĕ апрельте чирлерĕм. Ун чухне урамра мĕн тери аванччĕ, хитреччĕ! Ыттисем пек çутçанталăк илемĕнче киленсе çÿрейменрен мĕн чухлĕ чĕтренсе макăрмарăм-ши? Тепĕр чухне пĕтĕм вăя пухаттăм та тăрса ларма хăтланаттăм. Çук, ниепле те вăй çитместчĕ. Каялла вырăн çине лаках выртаттăм. Эх, умри сак çине те пулин хам тĕллĕн тухас килетчĕ те çав... Ÿт-пĕвĕм хама итлеместчĕ. Аннене пысăк тав! Вăл маншăн мĕн тери тăрăшрĕ, асапланчĕ, куççуль кăларчĕ. Кăшт та пулин савăнăç парнелес тесе ăшă тăхăнтартса картише хĕвел çине илсе тухатчĕ. Лараттăм вара кайăк чĕппи пек унталла-кунталла пăхкаласа. Сасартăк хам утайманни çинчен аса илеттĕм те чĕре тÿсмелле мар ыратса нăйлатчĕ.

Аттеçĕм, маншăн пĕрре те ан кулян... Хамăн вилес килмест те çав... Пурăнас та, пурăнас килет. Çитменнине кĕçех илĕртÿллĕ çулла çитет. Хĕвел те хитрен пăхĕ, кайăкĕсем те чуна тыткăнламалла юрă шăрантарĕç. Тавралăхĕ те куç умĕнчех симĕсленĕ. Таврири илемлĕхе, атте, эпĕ урăхран кураймастăп вĕт.

Çак йĕркесене çырнă чухне те авă куçăмран куççуль шăпăртататъ, алăсем чĕтреççĕ. Пурăнас килнĕрен макăратăп. Çак вăхăтра тăна çухатас марччĕ тесе ларатăп. Анчах пĕлетĕп, тăна эпĕ паян е ыран яланлăхах çухататăп...

Хальлĕхе ним çинчен те шухăшлас килмест. Шухăшсене вăйпах аяккалла сирсе ярас килет, анчах вĕсем манран хăпмаççĕ иккен. Çумрах йăшăлтатса çÿреççĕ.

Аттеçĕм, тепĕр хутчен йăлăнса ыйтатăп, эп вилнишĕн ан кулян. Аннепе аппасене, шăллăмсене тав. Вĕсем маншăн мĕн тери тăрăшрĕç-çке. Ман умран хăпма та пĕлмерĕç, анчах... эпĕ ура çине тăраймарăм...»

Богданов салтак фронтран таврăнсан пилĕк ачи те выçăпа вилнине пĕлнĕ. Пĕлнĕ те... куçĕ куççульпе тулнă, чышкисем чăмăртаннă. Ирсĕр нимĕçсене чунтан ылханнă...



*Элиза ВАЛАНС (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.*

ЧУНРИ

# Чыса упра

«Чыс – чи хаклă тупра, ăна çамрăкран упра», – тесе ахальтен каламан ватăсем. Питĕ тĕрĕс сăмахсем. Мĕн ачаранах пирĕн хамăр чыса упрамалла. Çакăнтан малашлăх, пуласлăх, пĕтĕм пурнăç килет.

Пурин те числă пулмалла. Ун пек чухне чунра та лайăх, пурнăçра та çăмăл. Йывăрлăхсене çĕнтерме вăй тупăнĕ. Пурнăç çулĕпе пĕр такăнмасăр утăн.

Çапах та манăн пĕр ыйту хускалать. Мĕнле пулмалла-ха пирĕн пурнăçра? Хуравне шыраса тупас тесе нумай вăхăт шухăшласа лартăм та çапларах пĕтĕмлетӳ турăм. Пирĕн япăх енсенчен хăтăлас тесен, манăн шухăшпа, никама та сăтăр тумалла мар, усал чунлă çынсенчен пăрăнса çӳремелле. Унсăр пуçне яланах, кирек ăçта пулсан та шухăшламалла, хамăр ăспа пурăнмалла. Ĕçе пурнăçланă чухне те çав шухăша тĕпе хума пĕлмелле. Тĕрĕс сăмах çеç каламалла, шанчăклă çын пулмалла. Ырă кăмăллă пулса юлташсене, тăвансене, ытти çывăх çынсене пулăшма тăрăшмалла.

Мĕн ачаранах чунпа таса пулмалла, усал ĕçсемпе çыхланмалла мар. Пур енчен те лайăх çын пуласчĕ! Числă-сумлă çынна пурте хисеплеççĕ, юратаççĕ. Ку вара питĕ лайăх, мĕншĕн тесен кашниех хăйне ырласан савăнать.

Чыс пирки нихăçан та манас марччĕ.

*Кристина ЛИСИЦИНА.*

Шупашкар.

**Литературăри йĕркесем**

*Тепĕр чухне кăвайт ниепле те чĕрĕлсе çитеймест. Начар çулăмĕ хăрăк-харăк хушшинче те аран мĕлтлеткелет, хальхаль сӳнес пекех. Эсĕ ăна сӳнтересшĕн мар, хут татăкĕсем пăрахатăн, типĕ çулçăсем, хыр е чăрăш лăссисем хуçа-хуçа чикетĕн, куклене-куклене вĕретĕн, мĕн те пулин тупса е ним те тупаймасан çи-пуç аркине сулла-сулла варкăш çил кăларатăн, çапла айланса хăшкăлсассăн тин вара вут амаланма тытăнать, сарăлнăçем сарăлса, пĕтĕрĕнсе, çулăм сăннисене тăсса, çапкалантарса-çиçĕнтерсе шултра туратсене çупăрлать те çатăртатса хĕм сапма, шĕл кăвара вăркăтма тапратать.*

*Пирĕн калаçу та, çавăн пек, тӳрех пуçланаймарĕ.*

*(Георгий ОРЛОВ «Вутри юрату»)*

*Юрату туйăмĕ… Кашни çын патне тĕрлĕрен килет вăл. Пĕрне савăнăç кӳрет, çунат хуштарать, теприне чăтайми асап, ырату уйăрать, ырра шанса тĕрекленнĕ çунатсене ним шелсĕр шартах çапса хуçать. Анчах кирек мĕнле пулсан та кашниех çав юрату текен туйăма чăтайми кĕтет. Мĕн илсе килет вăл хăйĕнпе пĕрле – ырату-и е телей, савăнăç-и е куççуль – ку нихăшне те кăсăклантармасть. Килсем, юрату, килсем…*

*(Елен НАРПИ «Пăрлă шыври хĕвел пайăрки»)*

ШĂПА



# Пурнăç пĕрре кăна…

– Света, тух, эпĕ çитрĕм, – шăнкăравласа пĕлтерчĕ Лида тусне. Акă пĕр-ик минутран хăмăр куçлă та хăмăр çӳçлĕ, вăтам пӳллĕ, шкул сумкине çурăм хыçне çакнă хаваслă хĕрача урама тухрĕ.

Шкулĕ кӳршĕ ялта вырнаçнă. Унта каймалăх пур. Хĕрачасем куншăн пĕрре те кулянмаççĕ, çул çинче калаçмалли тупăнатех. Светăна итлеме яланах интереслĕ, кашнинчех мĕнле те пулин каччăпа паллашни е телефонпа пуплени çинчен каласа парать вăл. Хальхинче те акă телефонĕ шăнкăртатрĕ.

– Çитрĕр-и? Кĕçех. Пĕр виçĕ минутран, – тесе телефонне сӳнтерчĕ те Света юлташĕ енне çаврăнчĕ. – Машинăпа каятпăр.

– Мĕнле машинăпа? Кампа? – тĕлĕнчĕ Лида.

Света кулса ячĕ те:

– Васьăпа, – терĕ.

Вася Светăна килĕштерет, уншăн тем тума та хатĕр. Хĕртен тăватă çул аслă вăл. Пикене качча илме те ĕмĕтленет. Анчах Света тин кăна вунпĕрмĕш класа çӳреме пуçларĕ, унăн экзамен пирки ытларах шухăшламалла… Тепĕр тесен, хăй Васьăна юратнине те туймасть-ха. Каччă лайăх калаçни килĕшет ăна, çавăнпа унпа юлташла пуплесен япăх пулас çук тесе шухăшлать.

Ялтан тухнă çĕрте уничере çăмăл машина ларать. Вася Светăна малти ларкăча вырнаçма хистерĕ, Лида хыçала ларчĕ. Эх, вĕçтерет кăна машина яка çулпа!

– Вася, хуллентерех кай-ха. Пысăк хăвăртлăхпа çӳреме хăрушă, пĕлместĕн-и? – шиклеНĕвне пытармарĕ пике.

– Манпа пĕрле чухне ан хăра, Света. Хам инкеке лексен те сана çăлса хăварăп, – терĕ каччă.

Шкула питĕ хăвăрт çитрĕç. Хĕрсем каччăпа сывпуллашрĕç те урока васкарĕç. Эх, çак тĕлпулу юлашки пуласса шухăшланă-и Света?

Вася вахта мелĕпе ĕçлеме кайни икĕ эрне ĕнтĕ.

– Темĕнле япăх тĕлĕк курнă кĕçĕр. Вася йĕркеллех-ши унта? Шăнкăравлам-ха, – терĕ Света тантăшĕпе шкула утнă чухне. Телефон сасси вăрăммăн тăсăлчĕ-тăсăлчĕ, хирĕç хуравлакан пулмарĕ. Хĕрача сăнĕ тĕксĕмленчĕ.

Шкула çитсен пĕрле вĕренекенсенчен пĕри хурлăхлă сăнпа Света патне пычĕ те хăхаран темĕн пăшăлтатрĕ. Хĕрача тӳрех класран вирхĕнсе тухрĕ, шкул хыçĕнчи улмуççи пахчине ыткăнчĕ, ĕсĕклесех макăрчĕ. «Эх, Вася, ма упраймарăн-ши хăвна? Каларăм вĕт-ха машинăпа хытă ан çӳре тесе! Ӳкĕте кĕртеймерĕм-ши?» – шухăшпа калаçрĕ вăл çут тĕнчерен яланлăхах уйрăлнă тусĕпе.

Чăнах та, пурнăç пĕрре кăна вĕт, унпа вылямалла мар. Тепĕр чухне каччăсен машинăна хытă хăваласа чăнкăрах курăнас килет пуль, анчах сире ырă-сывă кĕтекенсем, сирĕншĕн кулянакансем пурри çинчен ан манăр, тархасшăн.

*Алена ИВАНОВА.*

Элĕк районĕ.

ТУЙĂМСЕН ЫТАМĔНЧЕ



# Асамлă парне

Атте те ятлать мана, анне те мăкăртатса кăна çӳрет. Нимĕн те ĕçлеместĕн тесе сăмах тĕкеççĕ. Хăйсем те кнса анчах пурăнаççĕ-ха. Атте кунĕн-çĕрĕнех телевизор пăхать пулсан эпĕ мĕнрен кая? Анне пĕрмай ялапа çăвать, урăх нимĕн тума аптăрать-ши? Эпĕ вылăх-чĕрлĕх пăхса пулăшатăп вĕт, тепĕр чухне çĕрулми шуратма та хирĕç мар. Мĕншĕн мана юратмаççĕ-ши?

Тен, ахальтен ятлаçмаççĕ те пуль. Вĕренӳре япăхланса кайрăм-ха. Саккărмĕш класран аран-аран вĕренсе тухрăм. Хăвăрах шухăшлăр, пуçри пĕтĕм шухăша та пĕрле вĕренекен Алина йышăнать пулсан вĕренме-и унта? Темĕнле тăрăшсан та килĕшекен хĕрача сăнĕ куç умĕнчен каймасть, сасси те хăлхара янăрасах тăрать. Ăна мĕнпе те пулин савăнтарас, хам çине ăшшăнрах пăхтарас килет. Çавăн пек шухăшсем пуçа анратнă чухне те задача шутлама та, хăнăхтару пурнăçлама та йывăр. Килтисем ĕç хушсан та мĕн тумаллине тӳрех манса каятăп.

Алина çулла çуралнă. Çавăнпа пĕррехинче пире класĕпех хăйĕн менелникне чĕнчĕ. Çĕр çывăрайми пултăм, мĕн парнелесси çинчен шухăшласа халтан кайрăм. Манăн ăна ыттисенчен урăхларах, ĕмĕр асра юлмалли парнепе савăнтарас килчĕ. Шухăшласа тупрăм вĕт çавах!

Пире ĕç урокĕнче пĕчĕк арча ăсталама вĕрентнĕччĕ. Алина валли те çавăн пеккине, анчах капăртарах эрешпе тума шут тытрăм. Эх, аппалантăм! Хатĕр япалана çиелтен лакпа сăрларăм. Унтан йывăçран каскаласа кĕлчечек турăм, ăна шурă тĕспе сăрласа илемлетрĕм, çеçке айне «Алина, эпĕ сана юрататăп», – тесе çыртăм. Ăна вăл тӳрех асăрхаймĕ, пит сăнасан анчах курĕ. Акă манăн хăйне евĕр парне хатĕр.

Палăртнă кун туссемпе Алинăн çуралнă кунне пуçтарăнтăмăр. Ах, шурă кĕпе тăханнăскер, епле илемлĕ вăл. Манăн арчари кĕлчечек ун çумĕнче ытла та мĕскĕннĕн курăнĕ. Парнене тыттарнă чухне чĕрем тапни пур çынна та илтĕнчĕ пуль, çамка çине тар тапса тухрĕ. Темĕн мăкăр-мăкăр турăм, салам сăмахне те путлĕ калаймарăм, çакăншăн намăсланнипе хăвăртрах ытти ачасем патне кайса тăтăм.

Темшĕн халĕ чĕре вырăнта мар. Юратнине пĕлтерсе мĕншĕн çыртăм-ши тата? Алина çавна вуларĕ пулсан ăçта кайса кĕрес?

Нумай та хăналанаймарăм, атте шăнкăравларĕ те вутă куламаншăн ятлама тытăнчĕ. Анчах эпĕ куншăн калама çук савăнтăм, Алина манăн парнене тепĕр хут тытса пăхиччен кунтан хăвăртрах тухса тарас килчĕ. Халĕ вара сăлтав пур – атте ятлаçать, çавăнпа каçару ыйтса сĕтел хушшинчен тухрăм.

Вутта мĕн вăхăтра купаласа пĕтертĕм-ши? Алина пирки шухăшланипе çакна сиссе те юлаймарăм. Мĕн тума çыртăм-ши юратнине пĕлтерсе? Халĕ вăл çав сăмахсене вуласан, тен, манран кулĕ? Тен, урăх нихăçан та калаçмĕ? Эх, ма кайран тин шухăшласа илетĕп-ши?

Çывăрас умĕн Интернетри юратнă сайта кĕтĕм. Ман пата çыру килнине курсан чĕре тапми вăйланчĕ. Алинăран-ши? Чăнах та! Икĕ çыру. «Тавах, Петя, пысăк парнешĕн! Кун пеккине никамран та илсе курман эпĕ… Мĕнле пултартăн?» – тенĕ пĕринче. «Шутламанччĕ те… Анчах, эсĕ унта ахаль çеç çырман пулсан, эпĕ те сана юрататăп…» – тенĕ тепринче.

Çакăн хыççăн чунра темĕнле улшăну пулса иртрĕ. Пур ĕç те çăмăллăн пурнăçланать. Атте те кунĕн-çĕрĕн телевизор курса выртмасть халĕ – тен, ывăлĕ умĕнче намăс-ши, кил картинче пĕрмаях тем шаккать. Анне те кăмăллăн калаçма пуçларĕ. Эх, аслисене айăпличчен малтанах хамăн кăмăл-туйăма улăштармаллаччĕ иккен. Тавах Алинăна хавхалантарнăшăн! Тем тесен те кăсал шкулта тăрăшарах вĕренĕп, урoксенче Алинăна та пулăшасчĕ…

*ПЕТЯ.*

Канаш районĕ,
Ухман.

Тантăш 7
32 №, 2015, август, 6

# Пирĕн вăрттăнлăх



Диана ИВАНОВА (Вăрмар районĕ, Энĕшпуç шкулĕ) *ӳкерчĕкĕ.*

Анне каланă тăрăх, асанне мана, пĕчĕкскере, сăпкара сиктернĕ май пурнăçа ырă ут пек пурăнса ирттерме, ырă ĕç тума сунса акă епле юрланă:

«Каш-каш кашаман,
Пирĕн паттăр утаман!
Касчен кашта çӳллĕш пул,
Ирччен вĕрлĕк çӳллĕш ӳс!
Каш-каш кашаман,
Ырă уту ырă уттăр,
Ырă аллу ыр ĕç тутăр!»

Юрлама пăрахсан: «Эп калани çитсе пытăр», – тенĕ. Çавăнпах-и, тен, эпĕ çитĕннисем лаша çинчен калаçнине итлеме питĕ юрататăп. Урхамахне хăйне курсан ун патне пырса ачашламасăр та, чуна уçса калаçмасăр та лăпланмастăп. Асанне те лашасене питĕ хисепленĕ, вĕсен пĕчĕк кӳлеписене мĕнрен те пулин ăсталама юратнă. Пĕчĕкрех чухне эпĕ вăл тăмран, йывăçран е пушăт хуппинчен тунă чаплă урхамахсемпе каçăхса кайсах вылянă. Çитĕнерехпе хама килĕшекен чĕрчуна хут çине ӳкерме юрататтăм. Вĕсем манăн пĕр альбом туллиех ĕнтĕ. Мĕн тĕрли кăна çук пуль унта: кӳлни, кӳлменни, тӳлекки, чупкăнни; ĕç лаши, тур лаша, çӳрен лаша… Эпĕ час-часах вĕсене сăнаса савăнатăп.

Астăватăп-ха тата, урамри арçын ачасемпе кӳршĕри Митюксен тĕлне пухăнтăмăр та «урхамах-патак» çине утланса урам тăрăх тусан вĕçтерсе савăнăçлăн чупаттăмăр, çумăр хыççăн юриех лупашкасем çийĕн айăр пек кĕçенсе, ĕрĕхтерсе çӳреттĕмĕр, Константин Васильевич Ивановăн «Нарспи» поэминчи пекех ĕнтĕ. «Юланутçă» юлташсем хăйсен шухăш-ĕмĕчĕсемпе юмахри пек таçта аякка-аякка вĕçсе кайма хатĕр…

Ут утланса çӳрес ĕмĕт çакăнтан пуçланчĕ ĕнтĕ манăн. Чăтăмсăррăн кĕтеттĕм çав ырă самант çывхарса çитессе. Чăтăмсăррăн…

Акă çуркуннехи пĕр хĕвеллĕ кун манăн кӳршĕ Йăван мучи хăйĕн урхамахĕпе анкарти çĕрне сухалама тухнă. Чăтаймарăм, чупса çитрĕм ун патне. Мана курсан, теме сиснĕн, лашине кантармалла пек чарчĕ те:

– Эй, шăпăрлан, ним пăхмасăрах ăçталла чупатăн? Темĕн пулман пулĕ те? – тесе ыйтрĕ.

– Çук-ха, çук, мучи, нимех те пулман, – васка-васка чĕвĕлти чĕкеç сассипе пуплетĕп. – Йăван мучи, тархасшăн, мана çак Çилçунат çине хăпартса лартха. Манăн ун çинче питĕ ларса курас килет. Питĕ-питĕ…

Ырă мучи кăмăла тивĕçтерчĕ. Мана çĕклесе илчĕ те лаша çине хăпартса лартрĕ. Эпĕ мĕн тери хĕпĕртенине сирĕнтен нихăшĕ те чухласа илеймест пуль. Пĕлесчĕ сирĕн, еплерех савăнтăм! Пĕлесчĕ!..

– Эх, Çилçунатăм, манăн Çилçунат!
Атя, яра парах, кайсам эс малалла!
Ман кăмăл тулчĕ халĕ санпала! – лаша çилхине çавăрса тытса пуплетĕп Çилçунатăмпа. Çĕнĕ юлташăм маншăн савăннăн тулхăрса илчĕ те малалла утрĕ.

Йăван мучи мана йĕвен тыттарчĕ, вĕрентме манмарĕ:

– Лайăх, çирĕп ларса пыр, ӳкме ан шухăшла. Тем курса тăрăн санпа.

– Ан кулян, мучи, пурте йĕркеллех пулать. Çапла вĕт, Çилçунат?

Урхамах мана ăнланнă евĕр кĕçенсе илчĕ, «Çапла» – терĕ пулас.

Эх, пыратпăр Çилçунатпа хавасланса. Чунăм савăнать, чĕрем тухса тарасла тапать. Хама пĕр-пĕр паттăр евĕр туятăп. Ĕç лаши вăл манăн Çилçунат. Эпĕ те ун пекех ĕçчен пулăп.

– Йăван мучи, мĕн тери маттур санăн лашу!

– Маттур. Çул çине тухсан та, ĕçре те пушă кирлĕ мар. Çăварлăхламасăрах çӳретĕп. Каланине пурне те ăнланать. Питĕ ăслă. Лаши ырă вăл манăн. «Ыр лашана пĕр пушă, ыр çынна пĕр сăмах», – теççĕ-çке халăхра. Эсĕ те ыр çын пулма тăрăш, Ванюш. Çилçунат пек маттур пул.

– Юрать, Йăван мучи. Анне те мана: «Çын хушшинче сăпайлă, ял çинче ырă ятлă пул, аслисем каланине итле», – тесе вĕрентет.

– Тĕрĕс калать аннӳ, аслисен сăмахне яланах хăлхуна чик. Çилçунат патне вара кашни кунах килме пултаратăн.

– Эпир унпа паянтан çывăх туссем пулăпăр. Тĕрĕс калатăп-и, урхамахăм? Килĕшетĕн-и манпа юлташ пулма?

– Ванюш, – терĕ мана кӳршĕ. – Эсĕ лашасене юрататăн, мĕншĕн сирĕн килте те çак янавара усрас мар? Аçупа калаçса пăх. Вара санăн та килте çывăх тус пулĕ. Акă манăн Çилçунатăн ачи, тихи, пур. Вăл виçĕ уйăхра ĕнтĕ. Эсĕ ăна хăв пĕлнĕ пек пăхăн, э? Шухăшласа пăх, тиха илнишĕн пĕрре те ӳкĕнмĕн.

– Кун пирки шухăшласа пăхмаллах, мучи, шухăшласа пăхмаллах.

Тепĕр эрнерен манăн çуралнă кун çитет. Атте тиха парнелесен… Эх, мĕн тери пысăк, çĕр çинче çук савăнăç пулĕ маншăн. Э? Анчах… Туса парĕши çав савăнăçа мана атте?

Часах Йăван мучи анкарти çĕрне те сухаласа пĕтерчĕ. Эпĕ ăна тав туса киле таврăнтăм, аттене тиха туянас шухăш пуррине пĕлтертĕм. Вăл килĕшрĕ. Эпĕ вара… Савăннипе çӳл тӳпене вĕçсе кайманни кăна.

Тиха кунпа мар, сехетпе çитĕнет тейĕн. Эпĕ унран ниçта уйăрăлмастăп. Питĕ хăвăрт çитĕнсе ăйăр пулчĕ. Кил таврашĕнче тĕрлĕрен ĕçсем тума пулăшать. Пурте юратаççĕ ăна килте, ял çыннисем те ăмсанаççĕ.

Нумай вăхăт иртрĕ унтанпа. Халĕ Çиçĕм тиха мар ĕнтĕ – чăн-чăн ăйăр. Вăл ут кĕтĕвне çӳрет.

Кашни каçах эпир ачасемпе выртмана каятпăр. Питĕ интереслĕ унта. Хăшĕ-пĕри юмах халап юптарать, пĕр-пĕринчен тупмалли юмахсем ыйтмалла вылятпăр. Йăван мучи хăйĕн çамрăк чухнехи пурнăçĕ çинчен каласа кăтартать. Эпир вара ыйту хыççăн ыйту паратпăр, унăн кашни сăмахне тăнлатпăр. Пĕрре çапла, ирхи шуçăм та килетчĕ ĕнтĕ, ачасем пурте çывăрса кайнăччĕ, Йăван мучи те «тӳннĕччĕ», эпĕ ăнсăртран тĕменле сасă илтнипе вăранса кайрăм. Хăраса ӳкрĕм. Часах Çиçĕме аса илтĕм.

– Пах! Пах! – тетĕп лашана йыхăрса.

Урхамахăм ман ума туххăмрах çитсе тăчĕ. «Мĕн пулчĕ?» – тенĕн тулхăрса илчĕ. «Хам пур чухне ан хăра», – терĕ пуль. Шикленнипе чун ура тĕпнех çитнĕччĕ, лаша килсе çитсен лăплантăм. Çиçĕм сакăр çулта, питĕ вăйлă та ăслă, илемлĕ ăйăр. Маншăн вăл – чи çывăх тус. Çиçĕм мана çур сăмахранах ăнланать, çын чĕлхипе калаçма кăна пĕлмест.

Акă куçа темĕн курăна пуçларĕ. Манăн тăватă уралла тусăм та асăрхархĕ çак тĕлĕнтермĕше. Пăхатăп та – вĕçекен турилкке карлаттарса килет иккен. Катаран пĕчĕк пек туйăнать-ха. Анчах вĕçсе çитрĕ те çывăхри пĕве çине анса ларчĕ, пĕвене вуçех хупласа хучĕ. Пĕви вара пысăкчĕ, çур урам тăршшехчĕ. Акă турилккен çӳлти пайĕ уçăлчĕ те унтан иккĕн тухрĕç. Хăйсем питĕ пысăк, пĕр ултă-çичĕ метр тăршшех пуль. Икĕ утăм ярса пуссах пирĕн пата çитрĕç, вăрăм аллисемпе пире йăтса илчĕç: пĕри – мана, тепри – Çиçĕме. Манăн ăйăр урисемпе тăпăртатса, кĕçенсе илчĕ. Эпĕ ăна лăплантарма тытăнтăм.

Улăп евĕр пысăк çынсем чăвашла ăнланчĕç пулас, манпа калаçма пуçларĕç:

– Ан хăрăр, темиçе пин çул каялла пирĕн аслă асаттесемпе асаннесем те çак планета çинчех пурăннă. Ун чухне Çĕр çинчи пĕр халăх хитре сăн-питлĕ, хурăн пек яштака кĕлеткеллĕ, ырă кăмăллă та çемçе чунлă, çепĕç чĕлхеллĕ пулнă; теприсем мăн кăмăлланса кайнă, хăйне кăна юратнă тата хисепленĕ. Çутçанталăкри тĕрлĕ ырлăха, чĕрчунсене, тĕрлĕрен ӳсентăрана ним шелсĕр пĕтернĕ. Халăхсем хушшинче вара вăрçăсем пуçланнă. Çӳлти Пӳлĕхçĕ çынсене хытах тарăхнă, вĕсем çине çав тери вăйлă çил-тăвăл, вут-хĕм, шалкăм çумăр янă. Чăваш çĕрĕ çинче пурăнакан Улăп халăхĕ сăпайлăхпа, ыркăмăллăхпа, ĕçченлĕхпе уттисенчен уйрăлса тăнă. Вĕсем питĕ вăйлă та пултаруллă пулнă, вĕçмелли аппарат та шухăшласа кăларнă. Хĕрĕх кун та хĕрĕх каç пĕр чарăнми çумăр çуса тăрсан вĕсем хăйсен выльăх-чĕрлĕхне, ӳсентăранне пуçтарса вĕçекен турилкке çине тиенĕ те ют планета çине вĕçсе кайнă. Çĕнĕ çĕрте çĕнĕ пурнăç пуçланнă. Хăйсен планетине вĕсем Улăпхал ят панă. Çутçанталăка юратса, сыхласа пурăнаççĕ халĕ. Таса сывлăш, тăп-тăрă юханшыв, кăмăллă та тарават çынсем. Хуть те мĕнле çĕнĕлĕхе те пурнăçа кĕртес умĕн çутçанталăка сиен кӳмест-и, çын сывлăхне хавшатмасть-и тесе тĕрĕслесе пăхаççĕ. Веçех йĕркеллĕ, пур енлĕн те килĕшӳллĕ пулсан тин вара çĕнĕлĕхпе усă курма пуçлаççĕ. Çапах та Çĕр планетăна та вĕсем манса каймаççĕ, çулталăкра темиçе те килсе каяççĕ. Тĕлĕнтермĕшсем нумай иккен вĕсемшĕн кунта.

– Санăн лашу мĕншĕн санпа калаçмасть? – тĕлĕнерех ыйтаççĕ манран. – Пирĕн Улăпхал планетăри лашасем те çын чĕлхипе калаçаççĕ.

Эпĕ Çиçĕм питĕ ăслине, анчах калаçма пĕлменнине хурланарах пĕлтертĕм.

– Парса яр пире лашуна пĕр ик-виçĕ сехетлĕхе, пирĕн ут пăхакансем ăна самантрах калаçма вĕрентĕç, – терĕç улăпсем мана.

Шиклене-шикленех ăйăра вĕсемпе яма килĕшрĕм. Тăват уралла юлташăм хăй те çак хăнасем çав тери сăпайлă, ырă кăмăллă пулнине сиссе пĕрле кайма кăмăл турĕ.

Чăн та, тепĕр виçĕ сехетрен вĕçекен турилкке каялла çитрĕ. Урхамахăм аннă-анман мана сывлăх сунчĕ. Пирĕн чĕлхепе чиперех калаçать вăл, эпĕ уншăн калама çук савăнтăм. Мана Çиçĕм Улăпхал çинчен питĕ нумай каласа пачĕ. Эпир унпа çынсем çук чухне шăппăн пуплетпĕр, пурне те пĕлтерес мар тетпĕр.

Ку ĕç-пуç çинчен выртмана кайсан ачасене каласа патăмха, анчах вĕсем: «Суятăн!» – тесе кулма пуçларĕç. Текех пулса иртнĕ ĕç çинчен никама та каламарăм. Ку вăрттăнлăха Çиçĕмпе иксĕмĕр çеç пĕлетпĕр.

***Иван ИЛЬДЕР.***

Элĕк районĕ,
Мăн Ямаш.

# Хаваслă 2015 самант

## Икĕ-виçĕ çавра, пĕр саспалли тавра



1. Хаклă йышши чулсен виçи. 2. Уçланкăри ... /юрă-ран/. 3. Сӳпĕлти кайăк. 4. Икĕ вĕçлĕ япала. 5. Крокодил евĕр калта. 6. Утă çулмалли вырăн. 7. Литература жанрĕ. 8. Самолетсем сĕкĕшни. 9. Çăрттанран хăракан пулă. 10. Сутуçăн «пуянлăхĕ». 11. Çурçĕрти вĕрӳçĕ. 12. ... Бульба. 13. Тухтăр тумтирĕ. 14. Ун айĕнче шăши вилмен. 15. Апат умĕнхи çимĕç. 16. Эсĕ ăна халь алра тытса таратăн.

## Кам-ши, кам-ши?



1. Чăваш кăйкăрĕ, космонавт. 2. Чăваш çыравçи, хĕрарăм. 3. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра чылай çул вăй хунă журналист. 4. Чăваш сăвăçи. 5. Çыравçă – ... Тимкки. 6. Нумай ачаллă ӳнерçĕ. 7. Сăвăç – ... Ахун. 8. Чăваш халăх поэчĕ. 9. «Юманлăхра çапла пулнă» кĕнеке авторĕ. 10. Чăваш писателĕ. 11. «Хура çăкăр» романа хайлакан. 12. Чăваш композиторĕсен ертӳçи. 13. Ентеш, йĕлтĕрçĕ, Олимп вăййисен чемпионĕ. 14. Академик, этнопедагог. 15. Чăваш ӳнерçи. 16. Шӳтлĕ хушаматлă капкăнçă. 17. Луч Кĕркурийĕн чăн хушамачĕ. 18. Ӳнерçĕ – Праски ... 19. Сăвăç. 20. «Сĕве Атăла юхса кĕрет» кĕнеке авторĕ – ... Турхан. 21. Нумай нуша курнă чăваш халăх поэчĕ. 22. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ. 23. Вăл тахçан обком çынни пулнă. 24. Çыравçă. 25. Прозаик, хĕрарăм. 26. Сăвăç, телерадиора нумай çул ĕçленĕскер. 27. Чăваш гимнĕн сăвă авторĕ – ... Тукташ. 28. Чăвашри шăллă капкăнçăсенчен пĕри.

## Мулкач чупать, йĕр тăвать, хурав тупма васкатать

Хĕрринчен варринелле, пĕр сăмахне çырсах кăтартнă, ыттисене вырнаçтарса тухмалла. Йăлтах тĕрĕс пурнăçласан хĕрринчи тата варринчи ункăсенче икĕ сăмах вуланĕ.

Арпа – купа – трап – арап – уран – метр – карп.




## Шыракан — тупать

**Çакăнта илсе кăтартнă сăмахсене тăваткалсене вырнаçтарăр.**




Шкап Купе
Карл Така
План Арес
Арфа Ажур







Шампа, варан, карас, кăмпа, арлан, курак, çăхан, пăлан, карăш, кушак, карăк, чакак.

## Шашка-шахмăтла выляр, Сăмахкаçмăша тупар



### Шурă пуçватмăш

**Сылтăмалла:** 4. Çапнинчен вăйлăрах. 8. Пăлан евĕр чĕрчун. 12. Арăш-пирĕш /вырăсла/. 15. Чилири пушхир. 17. Йог меслечĕ. 19. Пушă лаптăк.

**Аялалла:** 1. Тĕнчери чи пысăк стадион. 4. Сутуçăн ĕç хатĕрĕ. 5. Амазонка юппи. 8. Шпинка – ... Хари. 9. Гуанако, альпака, ... 12. Сыпăк. 13. Мĕншĕн?

### Тĕслĕ пуçватмăш

**Сылтăмалла:** 2. Ялхуçалăх комбайнĕ /кĕскен/. 6. Шуйттан урине хуçмалли самант. 10. Чалăшса кайнă шрифт. 14. Кинори Лев Яшин евĕрлĕ хапха хӳтĕлевçи. 16. Холодильник. 18. Мăсăльмансен ячĕ. 20. Ăста вĕçевçĕ.

**Аялалла:** 2. Тинĕс пулли. 3. Синус мар. 6. «Хура полковниксен» влаçĕ. 7. Çав çыннăн качака пур. 10. Урам. 11. Чĕрчун.

***Николай КРАСНОВ** (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.***